1 сехет хушшинче тӗрлӗ шкул ачисем мастер-классра хатӗрленӗ ятарлӑ кӑларӑм

Ятарлӑ кӑларӑм

# Хыҫалти парта

Кайри мала!

Шкул ачисен хаҫачӗ

2006 ҫулхи раштавӑн 26-мӗшӗ

# Калайкасси шкулӗнче «Ҫамрӑксен пурнӑҫӗнчи шкул прессин вырӑнӗ»



А.Г.Николаев Калайкасси вӑтам шкулӗнче «Ҫамрӑксен пурнӑҫӗнчи шкул прессин вырӑнӗ» ятпа ҫавра сӗтел иртрӗ. Унта районти тӗрлӗ шкулсен журналисчӗсем хутшӑнчӗҫ: Шурча, Оринино, Ильинка, Панкли, Очӑкасси, Шатракасси, Аслӑ Хурачка, Тивӗш, Турай, Атапай тата ытти шкулсем те. Хӑнасем те чылай пулчӗҫ. Вӗсен хушшинче Маркаш район администрацийӗн вӗрентӳ пайӗн пуҫлӑхӗ Леонид Мочалов, вӗрентӳ пайӗн методисчӗ Светлана Егорова, Пӗчӗк пресса лигин президенчӗ Евгений Суховерко, Очӑкасси тӗп шкулӑн директорӗ Фаина Матвеева тата ыттисем.

Ҫавра сӗтелре ҫамрӑк журналистсем шкул прессине аталанма майсем туса памалли ҫинчен калаҫрӗҫ, Раҫҫейре тата Чӑваш Енре пӗчӗк пресса мӗнле шайра пулнипе паллашрӗҫ.



Ҫӑлӑр! Папарацисем тинке илеҫҫӗ! «Ҫӑлтӑрсем патне ҫул» фантастикӑлла калав авторӗ Дима Соколов

Аранах кӗтнӗ самант ҫитрӗ. Эпир раштавӑн 26-мӗшӗнче «Хыҫалти парта» хаҫат презентацине Калайкасси шкулӗнче ирттертӗмӗр. Кун пек ҫамрӑк журналистсен ҫавра сӗтелӗ Муркаш районӗнче пуҫласа пулчӗ. Палӑртнӑ вӑхӑта районри 28 шкултан 13-шӗ вӑхӑт тупса килчӗҫ.

Ытти слета килмен шкулсенче пурнӑҫ питӗ хӑвӑрт темпа пырать пулмалла: хӑйсем ҫинчен пӗлтерме те, хӑйсен ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен «Хыҫалти парта» хаҫатра вуласа пӗлме те вӑхӑт ҫук вӗсен.



**«Ҫамрӑксен пурнӑҫӗнчи шкул прессин вырӑнӗ» ҫавра сӗтелре Шурча, Оринино, Ильинка, Панкли, Очӑкасси, Шатракасси, Аслӑ Хурачка, Тивӗш, Турай, Атапай, Ҫатракасси, Тойгильдино шкулӗсем хутшӑннӑ.**

**Светлана Егорова районти ҫамрӑк журналистсен пӗрлешӗвне ертсе пыракан**: «Муркаш районӗнчи шкулсенче «Ассорти», «Жемчужина» тата «Хыҫалти парта» хаҫатсем тухаҫҫӗ. «Хыҫалти парта» кӑна 999 экземплярпа, 2 эрнере пӗре, 12 страницӑпа чӑваш чӗлхипе тухать, районти шкулсен пурнӑҫӗпе паллаштарать, шкул ачисене тӗрлӗ кӑсӑклӑ информаци парать. Шкулсен «Хыҫалти парта» тавра пӗрлешмелле, редакцие хӑйсен пурнӑҫӗ ҫинчен каласа паракан информаци тӑратмалла».

## «Хыҫалти парта» хаҫата ҫырӑнса илес текенсем валли

!

Пӗр уйӑхлӑх /2 номер/ ҫырӑнса илес тесен сирӗн шкулти вожатыйе чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекен патне пырса 8 тенкӗ памалла. Вӗсем вара районти ҫамрӑк журналистсемпе ӗҫлекен методистпа С.В. Егорова ҫыхӑнаҫҫӗ, хаҫата та ун урлах илсе тӑрӗҫ.